чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

22 /26428/№ Кĕçнерни кун, 2014, нарăс (февраль), 6 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Марк Шмулевичпа тĕл пулнă

***Нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Федерацийĕн çыхăну тата массăллă коммуникацисен министрĕн çумĕпе Марк Шмулевичпа тĕл пулнă.***

Михаил Игнатьев министр çумне республикăра яллă вырăнта пурăнакансене Интернет сечĕпе çыхăнтарас тĕллеве икĕ çулта татса панине пĕлтернĕ. Паянхи кун тĕлне карас çыхăнăвĕпе территорин 97-98% тивĕçтернĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ «Информаци общества» патшалăх программипе килĕшӳллĕн ялсенчи тĕслĕх библиотекăсене компьютер техникипе пуянлатнине, çавна май паян унти çынсене муниципалитет тата патшалăх пулăшăвĕсене «пĕр чӳрече» йĕркипе кӳнине каласа кăтартнă.

Марк Шмулевич нумаях пулмасть алă пуснă саккун пирки пĕлтернĕ, унпа килĕшӳллĕн 250-ран пуçласа 10 пин çын таран пурăнакан пунктсене оптика сечĕсемпе çыхăнтарĕç, ку Чăваш Енре информаци технологийĕсен малашнехи аталанăвĕ валли тивĕçлĕ инфратытăм туса хума май парĕ. «Пирĕн пĕлӳ паракан 500-е яхăн шкул, 1720 ытла ял-поселок, вĕсенчен пĕрре виççĕмĕш пайĕ çак категорие лекет», – палăртнă Михаил Игнатьев.

Раççей çыхăну тата массăллă коммуникацисен министрĕн çумĕ министерство малашне те Чăваш Енпе çыхăнса ĕçлеме, республикăна пысăк пĕлтерĕшлĕ программăсене пурнăçа кĕртес ĕçе явăçтарма хатĕррине пĕлтернĕ.

■ **Изольда БЕЛОВА**

## Раççей те пулăшĕ

***Культура программисен республика дирекцийĕ иртнĕ çул федерацин тĕллевлĕ «Раççей культури /2012 – 2018 çулсем/» программине хутшăнса Шупашкарти Пĕтĕм тĕнчери кинофестивале ирттерме 5123,9 пин тенкĕ ыйтса çырнă.***

Çулталăк вĕçĕнче Кинофестиваль канашĕн ларăвĕ иртнĕ, Раççейри кинофестивальсен переченьне çирĕплетнĕ. Унта пирĕн кинофестиваль те кĕнĕ.

Кăçалхи кăрлачăн 16-мĕшĕнче Раççей Культура министерствинче Шупашкарти Пĕтĕм тĕнчери кинофестивалĕн проектне пăхса тухнă, мероприятие ирттерме укçа-тенкĕпе пулăшма йышăннă.

Эпир вара, куравçăсем, çак пулăма чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. Вăл çу уйăхĕн 19-24-мĕшĕсенче иртĕ. ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов Мускавра Шупашкар кинофестивалĕн президенчĕпе Карен Шахназаровпа тĕл пулнă. Вăл хальхинче те унăн ертӳçи пулма килĕшнĕ. Ку çеç те мар, Чăваш Ен тĕп хулине «Мосфильм» музейĕн экспозицине илсе пыма шантарнă.

Жюри пирки çакна пĕлтĕмĕр: унăн председателĕ – Глеб Панфилов режиссер. Йышра Инна Чурикова та пулĕ.

Фестиваль кунĕсенче «çавра сĕтелсем», ăсталăх класĕсем, тĕл пулусем иртĕç. Çавăнпа пĕрлех сахал йышлă халăхсен кинематограф ыйтăвĕсемпе конференци те йĕркелĕç. Унта асăннă енпе ĕçлекен критиксемпе киноведсем хутшăнĕç.

■ **Надежда СМИРНОВА**

## Конкурса хутшăнăр

***ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерстви Чăваш Ен Пуçлăхĕн гранчĕсене илес тĕлĕшпе профессионал коллективсен хушшинче проектсен конкурсне ирттересси пирки пĕлтерет.***

Конкурса хутшăнакансен Чăваш Ен Культура министерствине документсен пуххине тăратмалла. Унта çаксем пулмалла: проекта тĕплĕн çырса ăнлантарни, техника заданийĕ, проекта пурнăçа кĕртмелли план, тăкаксен смети, проектпа ĕçлекенсен йышĕ.

Конкурс çак пахалăхсене тĕпе хурать: проект актуаллăхне, наци шайĕнчи пĕлтерĕшне, пуçарулăха, культура хутлăхне витĕм кӳрекен пахалăха, проект пурнăçа кĕме пултарнине.

Грантсене панă чухне çак самантсене шута илеççĕ: конкурсантăн обязательнăй йĕркепе бюджета тата патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсене тӳлес тĕлĕшпе парăм çуккине; грантпа тĕллевлĕ усă курнине.

Документсене 2014 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕччен ЧР Культура министерствинче çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17-мĕш çурт, 412-мĕш кабинет.

*Пĕтĕмлетӳ*

# Паха тавара пурте хапăл




***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер Правительство çуртĕнче республикăри промышленноç комплексĕн предприятийĕсен ертӳçисемпе тĕл пулчĕ. Малтанах промышленноçри лару-тăрупа кĕскен паллаштарчĕ. Раççейре унăн производство индексĕ пĕлтĕр 100 процент урлă каçнă, Чăваш Республикинче çак чикке кăштах çитеймест – 95%.***

Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕни вăйсăртарах предприятисене чăрмав кӳни сисĕнет. Пĕлтĕр ют патшалăхсем хăйсен продукцийĕсене пирĕн çĕр-шывра самаях вырнаçтарчĕç. Çавна май республикăра туса кăларакан хăш-пĕр тавар пахалăх тивĕçтерейменрен япăх сутăнчĕ. Туянакансем укçапа та вăхăтра татăлаймарĕç.

Çав вăхăтрах производствăна вăхăтра модернизацилекенсем, оборудование пуянлатакансем, вузсемпе тачă çыхăну тытса кадрсене пуçаруллă çамрăк специалистсемпе çĕнетекенсем малалла ăнăçлă аталанчĕç, промышленноç комплексĕпе производство индексне çĕклеме пулăшрĕç.

Республика ертӳлĕхĕ экономика малашлăхĕшĕн çине тăрсах тăрăшать – вĕренӳре, тĕпчев, ăслăлăх, пултарулăх, производство ĕçĕ-хĕлĕнче тата ертсе пырас, бизнес-проектсем хатĕрлес енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă 1000 çамрăка çулленех стипенди парать. Пĕрремĕш курсра ăс пухакан пулас инженерсене те хавхалантарма май тупнă. Чи пултаруллă 78-шĕ стипендипе пĕрле уйăхсерен 2 пин тенкĕ илсе тăрĕ.

Хăш-пĕр предприяти шкул ачисене, студентсене пырса курма, хăйсем кăмăллакан професси вăрттăнлăхĕсемпе çывăхрах паллашма лайăх услови туса панă. Инноваци проекчĕсене хăюллăн пурнăçа кĕртекенсем те пур. Михаил Игнатьев промышленноç аталанăвĕн паха енĕсене ырăпа палăртрĕ.

ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин республикăри промышленноç комплексĕн 2013 çулхи ĕç-хĕлне пĕтĕмлетрĕ, кăçалхи тĕллевсене уçăмлатрĕ.

Владимир Александрович малта тата юлса пыракан предприятисене пайăррăн асăнчĕ. 31-шĕ пĕр млрд ытла тенкĕлĕх продукци туса кăлараççĕ. Ăсатнă мĕн пур тавар калăпăшĕн 70 проценчĕ – вĕсен тӳпи. Ĕçлекенсен йышне сыхласа хăварнă çеç мар, кăштах ӳстерме те пултарнă. Республикăра промышленноçра вăй хуракансен вăтам ĕç укçи 19 пин ытларах тенкĕпе танлашать, Раççейре – 29 пин. Хăш-пĕр пĕрлешӳвĕн çĕр-шывăн вăтам кăтартăвĕнчен те иртет. 2013 çулта республика экономикине 16 млрд тенкĕ инвестици хывнă, çуррине – промышленноç.

Кăçалхи тĕллев – тавар пахалăхне май пур таран лайăхлатса суту-илӳре ăнăçлă вырнаçтарасси. Ăна пурнăçлама майсем çителĕклĕ. Çавăнпах-тăр министр шанăç пуррине палăртрĕ – 2014 çулта производство индексне 102-105 процента çитермелле.

Предприяти ертӳçисем те хăйсен пĕлтĕрхи ĕçĕпе паллаштарчĕç. Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешӳвĕн гендиректорĕ Михаил Резников йышăннă обязательствăсене тивĕçлĕн пурнăçланине, 2012 çулхинчен 49% ытларах продукци туса кăларнине каларĕ. Оборона саккасне пурнăçланă май кăçалхи тата 2015-2016 çулсем валли йышăннă тĕллевсем тата та пысăк иккен. Михаил Сергеевич йывăрлăхсене йышпа парăнтарма май килнине, промышленноç предприятийĕсен ертӳçисен канашне çĕнетме вăхăт çитнине аса илтерчĕ.

Çĕмĕрлери ятарлă автофургонсен завочĕ те Раççейĕн Оборона, Шалти ĕçсен министерствисен саккасĕсене пурнăçлать. Завод пĕлтĕр 3,3 млрд тенкĕлĕх /2012 çулта – 2,3 млрд/ хатĕр продукци ăсатнă. Кунта рабочисен ĕç укçи те, инвестиципе тĕллевлĕн усă курасси те пысăкланать, «Çамрăк специалист» программа ĕçлет.

Çав вăхăтрах «Промтрактор-вакун» АХО пĕлтĕр хытах уксахланă. Юлашки çулсенче 5 пинрен кая мар вакун туса кăларнă, 2013 çулхи кăтарту самаях пĕчĕк. «Кăçал унчченхи шая çитесшĕн», – пĕлтерчĕ ĕç тăвакан директорĕн тивĕçне пурнăçлакан Владимир Муханов.

Республика Пуçлăхĕ йывăрлăхсене татса пама пулăшас тĕллевпе чĕнсен коллективсене çитсе курма кăмăл пуррине пĕлтерчĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар"Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ. «Хыпар» – 460-86 тенкĕ.***

**КУН хыççăн КУН**

☎ 56-04-26

## Клубăн – çуралнă кун

***Канаш районĕнчи Ямашсем ялти клуба уçнăранпа 95 çул çитнине пысăк уяв йĕркелесех палăртнă. Ăна вĕсем Культура çулталăкне халаллană.***

Çак кун культура ĕçченĕсене саламланă, ветерансем хăйсен опытне аса илнĕ. Пухăннисене Ямаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Владимир Харитонов, вырăнти шкул директорĕ Андрей Владимиров, маларах ял тăрăхĕнче вăй хунă Валерьян Петров тата ыттисем саламланă. «Ентешсем» ансамбльпе «Задоринки» ташă ушкăнĕн юрри-ташшине куракансем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Ямашсем, культура вучахĕн управçисем, вырăнти артистсем çак уявра хăйсем туслă, килĕштерсе пурăннине лайăх кăтартнă.

**Р.ИВАНОВА.**

## Тĕрлет те, ӳкерет те ...

***Элĕк шкулĕнче вĕренекен Ирина Петухова пĕлĕшĕсемпе тăванĕсене каллех пултарулăхĕпе тĕлĕнтернĕ. Вăл «Манăн пĕчĕк тăван çĕр-шыв: çут çанталăк, культура, этнос» республика конкурсĕнче çĕнтернĕ.***

Пăрчăкан пек çивĕч хĕр ача пĕррехинче пысăк пĕр пуçлăха хăйĕн пултарулăх ĕçĕсемпе паллаштаракан сĕтелĕ патĕнче нумайлăхах тытса чарнă. Çапла майпа тӳре пĕлтерĕшлĕ ларăва та кая юлса çитнĕ.

Хĕр пĕрчи йăлтах амăшне – ĕç урокĕсене вĕрентекенне – пăхнă. Ирина 4-мĕш класра вĕреннĕ чухнех республикăра иртнĕ пĕр фестивале «Хĕрсен тумĕ: ĕнер, паян, ыран» проектпа хутшăннă. Каярах «Чăваш Ен – биорегион» конкурс лауреачĕ пулнă. Унтан ... «Хальхи тата авалхи» хăйне евĕр, илĕртӳллĕ çи-пуç пуххишĕн ятарлă диплома тивĕçнĕ. Пĕтĕм Раççейри конкурсра та вăл Элĕк гербне ӳкерсе ятарлă парнеллĕ пулнă.

**А.ГРОМОВА.**

## Аслан Тимофеевăн – 4 «ылтăн»



***Германири Мюнхен хулинче каратэ енĕпе иртнĕ Пĕтĕм тĕнче турнирĕнчен Чăваш Ен спортсменĕсем медальсемпе таврăннă.***

Ăмăртăва 18 çĕр-шыв каратисчĕсем хутшăннă. Унăн пĕтĕмлетĕвĕпе Раççейĕн пĕрлештернĕ команди иккĕмĕш вырăн йышăннă. Спортсменсем турнирта пухмача пурĕ 9 «ылтăнпа», 5 «кĕмĕлпе» тата 3 «бронзăпа» пуянлатнă.

Пирĕн ентешсенчен унта Шупашкарти политехника институтĕнче 2-мĕш курсра вĕренекен Аслан Тимофеева уйрăмах ăнăçнă. Каччă тĕрлĕ ушкăнра тупăшса 4 ылтăнпа 1 кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ. Турнир çĕнтерӳçине кăçал çĕртме уйăхĕнче Шупашкарта иртекен Европа чемпионачĕн аренинче тепĕр хут курăпăр.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Çуллахи вăйăсене хутшăнассишĕн

***Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕн манежĕнче çăмăл атлетика енĕпе çĕр-шыв ăмăртăвĕ вĕçленнĕ.***

Чăваш Республикине Раççейĕн 61 регионĕнчен 500 яшпа хĕр килнĕ. Виçĕ кунра вĕсем тĕрлĕ дистанцире вăй виссе кăçал Китайра иртекен çамрăксен çуллахи Олимп вăййисене хутшăнассишĕн тупăшнă. Ăмăртура Раççей спортсменĕсем пысăк кăтартусемпе те палăрнă. Мускав пики Алена Булгакова йĕтрене 18 метр та 15 сантиметр ывăтса, Мускав хĕрĕсен команди эстафетăра мала тухса çĕр-шыв рекордне çĕнетнĕ.

Чăваш Ен чысне ăмăртура 18 спортсмен хӳтĕленĕ. Пуринчен ытларах Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студентки Марина Сизова палăрнă. РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Сергей Смирнов патĕнче ăсталăха туптаканскер 200 метрлă дистанцире «ылтăн» çĕнсе илнĕ, 60 метра иккĕмĕш вĕçленĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Кăвак шĕвек ĕçнĕ те...

***Следстви комитечĕн Çĕнĕ Шупашкарти пайĕ Сĕнтĕрвăрринче 37 çулти арçын тата унпа пурăннă 48-ти хĕрарăм вилнĕ тĕслĕхпе тĕрĕслев ирттерет.***

Малтанлăха палăртнă тăрăх – вĕсем автомобиль чӳречисене тасатма усă куракан шăнман шĕвеке ĕçсе наркăмăшланнă. Иккĕшĕ те ниçта та ĕçлемен, ĕçкĕпе иртĕхнĕ. Сĕнтĕрвăррисем арçынпа хĕрарăма хулан çӳп-çап, каяшсем тăкакан вырăнĕнче час-часах курнă. Кӳршисем каланă тăрăх – арçынпа хĕрарăм темиçе кун каялла 5 литрлă пластик савăтри кăвак тĕслĕ шĕвеке ĕçнĕ. Ку автомобилĕн сивĕре те шăнман шĕвекĕ пулнă-тăр. Малтан арçын аптăраса ӳкнĕ, ăна больницăна илсе кайма тивнĕ. Кĕçех хĕрарăм та хăйне япăх туйма пуçланă – ăна та медучреждение ăсатнă. Шел те, йывăр наркăмăшланнăскерсене çăлса хăварма май килмен.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

**Çанталăк çинчен**

Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 20, каçхине 22 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 81 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 57 минут.**

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 18, каçхине 16 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 74 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 1 минут.**

**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**



# «ЭПИР ТИВĔÇЕ ЧЫСЛĂН ПУРНĂÇЛАНĂ...»

**Нарăсăн 15-мĕшĕнче Раççейре интернационалист салтак-офицерсене сума суса Асăну кунĕ иртĕ. 1989 çулта Совет Çарĕсен сахал йышлă контингентне Афганистанран илсе тухнăранпа 25 çул çитнĕ ятпа паллă тăваççĕ ăна.**

**Ун чухне кӳршĕллĕ пулнă патшалăх çĕрĕнче çар хирĕçĕвĕсем пынă вăхăтра совет салтакĕсем хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçланă, паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Хаяр çапăçусем паллах пысăк çухату кӳчĕç. Вунă çула тăсăлнă вăрçăра Совет Союзĕн 14 пине яхăн салтакĕпе офицерĕ пуç хунă. 25 пинĕшĕ аманнă, сусăрланса инвалид пулнă. Пирĕн республикăра çуралса ӳснĕ 6 пин ытла çын Афган вăрçин вут-çулăмĕ витĕр тухнă. Чăваш Республикинчи район-хуласенчи çар комиссариачĕсенче, ЧР Прокуратуринче, ЧР ШĔМĕнче, Федерацин Хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕнче, социаллă хӳтлĕх пайĕсенче 3881 «афганец» шутра.**

**Çапăçура 176-шĕ аманнă, 117-шĕ вилнĕ, 4-шĕ хыпарсăр çухалнă, 114 çын – инвалид. Шупашкарти «Çĕнтерӳ» мемориал комплексĕнче хăй вăхăтĕнче тăван кĕтесе цинк тупăкпа илсе килнисен ячĕсене яланлăхах асра хăварас тесе вун виçĕ çул каялла Асăну чулĕ хывреç. Вунă çултан Чăваш Ен историйĕ тепĕр пулăмпа палăрса юлчĕ – çакăнта Афганистанра тата çĕр-шывăн ытти регионĕнчи юнлă хирĕç тăрусенче куç хупнисене пуç таймалли сăваплă вырăн йĕркеленчĕ. Афган вăрçин ветеранĕсем Шупашкарта иртнĕ 6-мĕш съездĕнче çапăçури хăйсен вилĕмсĕр юлташĕсене асра тытса вĕсен ячĕпе палăк уçма, кашнин ятне чул палăк çине ылтăн сас паллисемпе çырса хума шантарнă сăмахне çирĕп тытрĕç – гранитран калăпланă мăнаçлă палăк килес ăрăва Чăваш Ен салтакĕсен паттăрлăхĕ çинчен аса илтерĕ. Сăваплă çак ĕçе пурнăçа кĕртме Афганистан вăрçин ветеранĕсен республикăри пĕрлĕхне /РВСА/ Шупашкар хула администрацийĕ хавхалантарнă, республика ертӳлĕхĕпе правительстви хăйсен тӳпине хывнă.**

**Мĕнех калăн, çак пулăм манăн ӳсĕмрисен тата хыççăнраххисен кун-çулĕнче тарăн йĕр хăварчĕ. Вăл пулăма тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕрен хакларĕç, пĕр пĕтĕмлетӳ патне çитсе тухаймарĕç. Шупашкарти асăннă палăка уçма ун чухне РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракцийĕн ертӳçин çумĕ Ф.Клинцевич /Хĕрлĕ Çăлтăр орденне икĕ хут, ытти наградăна тивĕçнĕ саппасри полковник/ тата Афганистан вăрçин ветеранĕсен Раççейри пĕрлĕхĕн правленийĕн ертӳçи В.Вшивцев /виçĕ орден кавалерĕ/ килнĕччĕ.**

**Франц Адамовичпа Владимир Сергеевич шухăшĕпе – эпир Афганистана çителĕклех çар илсе кĕме пултарнă, вара пĕр душман та Пакистан чикки урлă каçаймастчĕ. Лăпкă лару-тăру тытса тăма унти вăйсемех çителĕклĕччĕ. Анчах та ку вăл вăхăтлăх лăпкăлăх пулатчĕ. Хамăрăн çарсене кунтан илсе тухнă хыççăнах пурнăç тӳрех унчченхи, малтанхи пекех йĕркеленсе каятчĕ. Мĕншĕн тесен Афганистан правительствин влаçа тытса тăма вăй çитмен. Çавăнпа та, кашни çулах пин çурă салтака çухатса, эпир хăвăрт çĕнтерме ăнтăлман. Революцие çирĕплетме май памалла, хамăр майлисене ытларах тупмалла пулнă.**

**Паллах, унта ывăлĕсене çухатнă амăшĕсене çапла кирлĕ пулнă тесе ĕнентерейменĕн. Унччен турă ирĕкĕ çавăн пек ĕнтĕ тесе лăплантарнă. Халĕ хамăра лăплантармалли çук, çавăнпа та хăпартланулла сăмахсем каласа, çăмăллăхсем парса айăпа сирме тивет.**

**«Афганистанри вăрçă пирĕншĕн питĕ йывăр килчĕ. Мĕншĕн тесен чуллă-сăртлă çĕр-шывăн пĕтĕм лаптăкне туллин сăнаса тăрайманран, унти халăхăн йăли-йĕркине, шухăшлавне пĕлменрен эпир тăтăш йывăр çухату тӳснĕ: дехкан кăнтăрла суту-илӳ тунă, каçхине алла автомат тытнă. Вăл пирĕн çинчен пурне те пĕлнĕ, эпир ун çинчен – нимĕн те. Çавна пула мĕн чухлĕ пурлăх пĕтрĕ, мĕн чухлĕ çамрăкăн пурнăçĕ татăлчĕ...» – тенĕччĕ хăй вăхăтĕнче Совет Союзĕн Геройĕ Руслан Аушев генерал-майор.**

**Совет Союзĕн Геройĕ Борис Громов генерал-полковник, Афганистана кĕртнĕ çарсен командующийĕ, 25 çул каялла Совет Çарĕн контингентне Афганистанран илсе тухнă чухне тĕп телекурава панă интервьюра пирĕн кашни салтакпа офицер интернационалист тивĕçне чыслăн пурнăçланине палăртрĕ: «Нумайăшĕ, çав шутра эпĕ те, туслă халăха Апрельти революци çĕнтерĕвне çирĕплетме пулăшма килнине ăнланнă... Эпир унта камсем пулнă – хӳтĕлевçĕсем е оккупантсем – Азири пысăках мар çĕр-шыв çыннисем хăйсем хак паччăр. Мана халĕ те Кабулта е Саланг тăрăхĕнче «шурави» курăнсан, ăна самантрах тĕрлĕ çулти çынсем сырса илни çинчен каласа кăтартаççĕ. Паянхи кун та вĕсем пире хисеплеççĕ. Эпир вĕсен умĕнче айăплă пулин те. Хамăр çарсене Афганистанран илсе тухнă хыççăн унти халăха пăрахнăшăн, ăна пулăшманшăн айăплă эпир. Пирĕн хыççăн унта пĕтĕмпех арканнă. Халĕ те лăпкă мар... Эпир хамăр тивĕçе чыслăн пурнăçланă. Унта пулнă кашни салтак, сержант, офицер умĕнче пуç таятăп».**

**Çакă тĕрлĕ çулта Афганистанра хĕсметре тăнă, унта пуç хунă е каярахпа йывăр сурана пула пурнăçран уйăрăлнă ентешсем çинчен те ырăпа асăнниех, чăваш каччи хăрушлăхра нихăçан та çын хыçне пытанманни çинчен каланиех. Çар çыннин таса ятне яманшăн тав туниех.**

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Тăван сăмах*

# Чăваш чĕлхи хăйĕн çепĕçлĕхне ан çухаттăр

***Чăваш Республикин Вĕренӳ институчĕн чăваш филологийĕпе этнокультура вĕренĕвĕн кафедрипе лабораторийĕ тăван чĕлхепе сăмахлăха вĕрентекенсемпе тачă çыхăнса ĕçлет, учительсен пĕлĕвĕ пысăк шайра пултăр тесе тăрăшать. Кафедрăна ĕç кунĕсенче хуть те хăш вăхăтра кĕрсен те унта яланах – ĕçтешсем: пĕрисем çĕнĕ меслетлĕхсемпе паллашма çитнĕ, теприсем вĕрентӳре сăнавлă ĕçлесе пухнă паха опычĕпе паллаштарма çитнĕ, виççĕмĕшĕсем кунта ăс пухма килнĕ те – сĕнӳ илеççĕ, курс ĕçĕн темине уçăмлатаççĕ. Çапла, кафедра кунран кун учительсемпе пĕрле пĕлӳ çулĕпе утать, шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес ĕçе лайăхлатас тесе вăй хурать.***

Интернет тата информаци ытти хатĕрĕ вăйлă аталанса пыракан тапхăра кĕтĕмĕр. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем те пурнăçран юлмаççĕ, вĕренӳри çĕнĕлĕхсене алла илсех пыраççĕ. Пархатарлă çак ĕçре чăваш чĕлхипе литератури кафедрин тӳпи те пур. Вăл Чăваш Республикинчи тата ытти регионри шкулсенче ĕçлекен педагогсемпе квалификацие тăтăшах ӳстермелли курссем, тĕрлĕ темăпа теорипе хăнăху семинарĕсем, канашлусем, интернет конкурссем, онлайн-консультацисем йĕркелет. Кафедра ĕçченĕсем тăван чĕлхепе литература вĕрентекенсен пĕлĕвне тата пултарулăхĕпе ăсталăхне çӳллĕ шая çĕклессишĕн чылай вăй хураççĕ. Вĕсем пултарullă, çĕнĕлле ĕçлекен учительсене пухса ларусем ирттереççĕ, кĕнеке тата меслет кăтартăвĕсем çыракансен ал çырăвĕсене хаклас ĕçе хастар хутшăнаççĕ. Кашни çул кафедра учительсен республика аттестацине йĕркелет, вĕрентекенсен ĕçĕн пахалăхне вырăна тухса хаклать.

Вăхăт шкул пурнăçне те çĕнĕлĕх кĕртме ыйтать. Кафедра ĕçченĕсем 2013 çулта чăваш шкулĕн 5-9-мĕш класĕсем валли "Чăваш чĕлхи" тĕслĕх программи пичетлесе кăларчĕç. Авторĕсем – И.А.Андреев, Г.Н.Семенова профессорсем тата Ю.М.Виноградов доцент. Вĕсем тĕслĕх программине Федерацин патшалăх вĕренӳ стандартне тĕпе хурса хатĕрленĕ. Çавăнпа вĕренӳ содержанине виçĕ ушкăна уйăрнă: 1/ коммуникаци е хутшăну компетенцийĕ /калаçу тата çыру урлă хутшăнас ăсталăх/; 2/ чĕлхе тата лингвистика компетенцийĕ /чĕлхе пĕлĕвĕн тĕп ăнлавĕсене вĕренес ăсталăх/; 3/ культура пĕлĕвĕн компетенцийĕ /пуплев культурине вĕренес ăсталăх/. Программăра ачасен вăл е ку компетенцине алла илме мĕнлемĕнле темăсем кирлине кăтартса тухнă, сехетсене палăртнă.

Паянхи кун 9-мĕш класс вĕренсе пĕтернĕ ачан чăвашла тĕрĕс калаçма, çырма пĕлни тата тăван чĕлхепе хутшăнма пултарни чи пĕлтерĕшли пулмалла. Ку вара вĕренӳ вăхăчĕпе те, ытти предмет ретĕнче чăваш чĕлхи мĕнле вырăн йышăннипе те тачă çыхăннă.

2008 çултанпа Чăваш Республикин чăваш шкулĕсенчи ачасем 9-мĕш класс пĕтернĕ май чăваш чĕлхипе аттестаци экзаменĕ тытаççĕ. Патшалăх тĕрĕслевĕнче ачасем тăван чĕлхене еплерех чухланине, унпа çырура усă курма пĕлнине, илемлĕ литературăри ĕççене паянхи пурнăç пулăмĕсемпе танлаштарма тата шайлаштарма пултарнине аван кăтартаççĕ. 2012 çултан пуçласа 11-мĕш класс вĕренсе пĕтерекенсем те чăваш чĕлхипе патшалăх экзаменĕ тытаççĕ. Çакă чăваш чĕлхине ытти предмет шайне тăратни, вĕрентекене хисеплени пулать. Ырă пулăм тăван чĕлхен витĕмне ӳстерме тата çамрăксене тĕрĕс воспитани пама пулăшать. Паллах, шкул ачисен пĕлĕвне хакламалли тĕрĕслев ĕçĕсене хатĕрлеме Вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедри те хутшăнать.

Чăваш чĕлхипе литератури кафедри Чăваш наци конгресĕпе тата республикăри чăваш чĕлхипе литератури учителĕсен ассоциацийĕпе пĕрле чăваш чĕлхине чи лайăх вĕрентекене тупса палăртас тата тăван чĕлхе учителĕн профессине тивĕçлĕ хак пама пулăшас тĕллевпе çулсерен конкурс ирттерет. Республика конкурсне районта /хулара/ пĕрремĕш вырăн йышăннă чăваш чĕлхи учителĕсем хутшăнаççĕ. Вĕсем пултарулăх ăмăртăвĕнче тăван чĕлхепе ăсталăх урокĕсем ирттереççĕ, чăваш тата вырăс чĕлхисене шайлаштарса вĕрентнине, халăхсен культура хутшăнăвне шута илнине, сăвва илемлĕ каланине, юрра-ташша ăста пулнине кăтартаççĕ.

Республика ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ ĕçтешсем 2007 çултанпа наци чĕлхине вĕрентекенсен Раççей конкурсне хутшăнаççĕ. Кунта та вĕсем чăваш ятне ямаççĕ, пысăк ăсталăх кăтартаççĕ: 2007 çулта Е.Майков /Шупашкар районĕ, Кăшавăш шкулĕ/ "çĕнтерӳçĕ /новатор/ учитель" ята тивĕçнĕ, 2008 çулта А.Игнатьева /Шупашкар хули, 12-мĕш шкул/ "чи лайăх эссе" номинацире çĕнтернĕ, 2009 çулта Г.Абрамова /Шупашкар хули, 59-мĕш шкул/ 2-мĕш вырăн йышăннă тата "Вĕренӳпе меслетлĕх пуххи" номинаци çĕнтерӳçи пулнă, 2010 çулта А.Ядрицова /Йĕпреç районĕ, Йĕпреçĕн 2-мĕш шкул/ 1-мĕш вырăн йышăннă, 2011 çулта М.Печникова /Шупашкар хули, 60-мĕш шкул/ "Раççейĕн чи лайăх учителĕ" медаль илме тивĕçлĕ тата "Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн ăсти" номинаци çĕнтерӳçи пулнă, 2012 çулта А.Степанов /Муркаш районĕ, Калайкасси шкулĕ/ – 1-мĕш, 2013 çулта И.Диарова 2-мĕш вырăн йышăннă. Раççей шайĕнче çакнашкал пысăк çитĕнӳ чăваш чĕлхи вĕрентекенĕн профессийĕ чи сумлисенчен пĕри пулнине çирĕплетет. Паллах, сăваплă çĕнтерӳ кафедра ĕçтешĕ хутшăнмасăр пулмастех. Хатĕрленӳ тапхăрĕнче унăн юлташла пулăшăвĕпе ырă канашĕ тĕп ăмăртура куç кĕрет палăрать, çĕнтерме вăй-хал парать.

Чăваш чĕлхине шкулта вĕрентес ĕçре паллă чĕлхеçĕ И.А.Андреев профессор чылай вăй хунă. Вăл хăйĕн пархатарлă пурнăçĕн юлашки çулĕсене Вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедринче ĕçлесе ирттернĕ. Мана та 2 çул унпа пĕрле ĕçлеме тӳр килнĕччĕ. Иван Андреевичпа пурнăç тата чĕлхе ыйтăвĕ пирки калаçни, хушăран шӳтлесе юптарни халĕ те асра. Кун-çулăмра пысăк ученăйпа тĕл пулма май килнишĕн питĕ савăнатăп.

Çĕнĕ вĕренӳ стандарчĕпе килĕшӳллĕн 2014 çулта чăваш шкулĕн 5-9-мĕш класĕсем валли – "Чăваш литератури", вырăс шкулĕн 10-11-мĕш класĕсем валли "Чăваш литератури" тĕслĕх программисем тата чăваш литератури вĕрентмелли меслетлĕх кăтартăвĕ пичетленсе тухмалла. Явапллă çак ĕçе кафедра ĕçченĕсем те хутшăнаççĕ.

Çын илемлĕ калаçма, тĕрĕс çырма ача чух çăмăллăнрах тата хăвăртрах хăнăхать. Çавăнпа та калаçăвĕ-пуплевĕ, ăс-хакăлĕпе тавра курăмĕ шкулта мĕнле вĕрентнинчен тата чăваш чĕлхипе литератури учителĕн пĕлĕвĕпе пултарулăхĕнчен нумай килет. Тăван чĕлхене вĕрентекенсен ăсталăхĕ вара Вĕренӳ институтĕнче квалификацие ӳстермелли курссенче, семинарсенче, интернет конкурссенче, "Чăваш чĕлхине чи лайăх вĕрентекен" ятпа иртекен ăмăртусенче, "çавра сĕтелсенче" тата шкулта пуçарулла ĕçленинче туптанать.

■ **Геронтий НИКИФОРОВ,**
**ЧР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ**

*Ас тăвăм*

# Блокадăри асап тата чăн-чăн паттăрлăх

***Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче СССР Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен ретне Чăваш Енрен 208 пин çын тăнă, вĕсенчен 106 пинĕ каялла таврăнайман. 54 пине яхăн çынна орден-медальпе наградăланă. 80-шĕ /вĕсенчен 20-шĕ – вилнĕ хыççăн/ Совет Союзĕн Геройĕн ятне илме тивĕçнĕ. Ленинградшăн пынă çапăçусене ентешсем те хутшăннă.***

Нева çинчи хула 900 куна пынă ыратупа асапа чăтса ирттернĕ, чăн-чăн паттăрлăх кăтартнă. Ăна 1941 çулхи авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче йăлтах блокадăна илнĕ. Ленинграда хӳтĕлеме хутшăннă Василий Михайлович Корчагин хăйĕн аса илĕвĕсенче çапла çырать: "Çав кунсене нихăçан манмăп... Блокадăн хăрушă вăхăтне чăтса ирттертĕм. Связист, снайпер пултăм, разведкăна икĕ хут кайрăм. Унта манпа пĕрле пыни тăван килне таврăнаймарĕ... 125 грамм çăкăр, вăл та пулин таса мар, курăкпа хутăштарни... Эпĕ тăвата çапăçăва хутшăнтăм, пире наградăсем памарĕç. Ленинград çывăхĕнче çакăн пирки шухăшлама вăхăт пулман – 1941 çулта эпир танксем айне çунакан хутăшпа выртнă..."

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă Мефодий Иванович Денисов, Шăмăршă районĕнчи Кивĕ Чукал ялĕнче çуралса ӳснĕскер, тăшман тапăннă кун Балти флотĕнче хĕсметре тăнă – Иван Сладков ячĕллĕ Хĕçпăшал шкулĕнче. Блокада кунĕсем пирки вăл çапла çырать: "Вырсарни кун... Кам вахтăра, кам хулана кайнă. Эпĕ ирĕклĕччĕ те – картишĕнче уçăлса çӳреттĕм. Юлташсем вăрçă пуçланнине пĕлтерчĕç. Пире тӳрех пĕр çĕре пухрĕç те В.М.Молотов радиопа калаçнине итлерĕмĕр. Флотра хĕсметре тăракансемпе командирсем пурте хăйсене фронта ямашкăн ыйтса шкул командованийĕ ячĕпе рапорт çырма пуçларĕç. Эпĕ те çыртăм, çапах хуравĕ пулмарĕ-ха... Çурла уйăхĕнче фронт Ленинград патнелле çывхарса пыратчĕ. Тинĕс пехотин бригадине йĕркелес ĕç малалла тăсăлчĕ. Манăн черет те çитрĕ... Бригада йĕркеленсен пире авăн уйăхĕнче фронта ăсатрĕç. Хĕвеллĕ çанталăкчĕ, ăшăччĕ. Эпир Ленинград тăрăх Урицк патнелле – унта хаяр çапăçусем пыратчĕç – утатпăр. Палăртнă вырăна каç еннелле çитме пуçланăччĕ çеç – пеме тытăнчĕç, пĕтĕм бригада саланса кайрĕ. Пулеметсем шатăртаттараççĕ, снарядсем çурăлаççĕ, тарпа çунăк шăрши тăрать. Шăп çакăнта пирĕн çарсем фашист дивизийĕсене тытса чарнă...

Ленинградра пурăнакансемпе çар çыннисемшĕн чи йывăр тапхăр пуçланчĕ: 1941-1942 çулсенчи сивĕ те выçă хĕл. Эпир Ленинград çар портне, вăрçă хатĕрĕсен складĕсене тата ытти объекта хураллараăмăр. Пире, çар çыннисене, 300 грамм çăкăр, яшка, кăштах кокос çăвĕ, кунсерен лăсă шĕвекĕ паратчĕç. Организм кунсерен хавшаса пычĕ. Хăрушă çав хĕл манăн асра хура хăю пек юлчĕ.

...1944 çулхи кăрлач уйăхĕ. Сивĕ, йывăççене пас тытнă. Артиллери хатĕрленĕвĕ пуçланчĕ: канонада тăрать, вун-вун хĕç-пăшалтан пенĕрен çĕр чĕтренет. "Сăрă лаша", "Хĕрлĕ ту" фортсенчен йывăр артиллери кĕмсĕртеттерет. Артхатĕрленӳ сехет ытла тăсăлчĕ. Унтан çарсем пурте наступление кусрĕç..."

Пулемет взвочĕн командирĕ, 22-ри Иван Васильевич Смирнов, Комсомольски районĕнчи Хирти Сĕнтĕр ялĕнче çуралса ӳснĕскер, Ленинград стенисен çывăхĕнче ĕмĕр сӳнми мухтав çĕнсе илнĕ. Тăшман пехотин тата танкĕсен атакине сирсе ярас тенĕ чухне унăн ротинчи пĕтĕм пулеметчик вилнĕ. Çакна пула Смирнов хăй пулеметран пеме пуçланă, тăшманăн 50 ытла салтакне тĕп тунă, пĕр утăм та каялла чакман. Паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ вăл: пулемечĕпе пĕрлех нимĕç танкĕ айне пулнă.

Чăваш ывăл-хĕрĕ Ленинграда фронтра çеç хӳтĕлемен. Чăваш Енре пурăнакансем предприятисенче, колхоз-совхозра хăйсене шеллемесĕр ĕçленĕ, Хĕрлĕ çара хĕç-пăшалпа тивĕçтермешкĕн укçатенкĕ, çĕр-шыв хӳтĕлевçисем валли ăшă япаласемпе парнесем пухнă. ВКП /б/ Чăваш облаç комитечĕн бюровĕн 1942 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче иртнĕ ларăвĕн протоколĕнчен: "...Рабочисем, служащисем, Канаш станци узелĕн тата вакун юсакан заводăн инженери-техника ĕçченĕсем Ленинград чукун çулĕ çинче вăй хуракансем валли парне пухма йышăннă. Канаш станцийĕнче ĕçлекенсем 4,5 га çĕр улми лартнă, çу уйăхĕн 17 тата 31-мĕшĕсенчи воскресниксенчен 6 пин тенкĕ уйăрса хунă, рабочисемпе служащисен тата вĕсен çемйисен хушшинче парне пухассине йĕркеленĕ. Вакун юсакан завод коллективĕ 3 га çĕр улми лартнă, воскресниксенчен 4 пин тенкĕ уйăрса хунă, 4 сысна самăртма пуçланă. Узелăн ытти служби те çакнашкалах йышăну тунă".

Чăваш АССРĕн Халăх Комиссарĕсен Канашĕ тата ВКП /б/ Чăваш обкомĕн бюровĕ 1943 çулхи ака уйăхĕн 11-мĕшĕнчи 482 №-лĕ постановленийĕпе килĕшӳллĕн Ленинграда совхозсемпе хушма хуçалăхсенче лартмашкăн 600 тонна çĕр улми ăсатнă: Вăрнарти пунктран – 130, Канашран – 150, Йĕпреçрен – 120, Çĕмĕрлерен – 120, Шупашкартан – 80 тонна.

1944 çулхи кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнăранпа пĕрремĕш хут артиллери салючĕ панă. 324 тупă Ленинград тӳпине 24 хут çутатнă, çапла майпа тĕнчене тăшман блокадине сирни çинчен пĕлтернĕ. Унтанпа 70 çул иртрĕ. Хăрушă çав кунсем пирки эпир нихăçан та манмăпăр.

■ **Мария БЕЛКОВА,**
**хальхи истори архивĕн ĕçченĕ**

# Сталинградран – Эльба хĕррине



Кӳкеçпе юнашар Пайтирекре çуралса ӳснĕ Степан Иванова çара 1942 çул пуçламăшĕнче илнĕ. Мускав çывăхĕнчи çар училищин кĕçĕн командирсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Воронеж фронтне /1942 çулхи утă уйăхĕнче йĕркеленнĕ/ лекет. СССР Хĕçпăшаллă вăйĕсем Воронежа илессишĕн талпăнакан тăшмана самаях тӳпкеççĕ, унăн Сталинграда çул тытма хатĕрленнĕ пысăк ушкăнне тытса чараççĕ. Хаяр çапăçусене С.Иванов сержантăн расчечĕ те хутшăнать. Тытăçусенчен пĕринче вăл аманать.

1942 çулхи çĕртмере госпитальтен сипленсе тухнă хыççăн вăрçă çул-йĕрĕ ентеше çулăмлă Сталинграда çитерет. Командовани кĕçĕн лейтенанта реактивлă орудине – "Катюшăна" шанса парать. Сталинградшăн пынă хаяр çапăçусенче Ивановăн "Катюши" те хăйĕн "хаярлăхне" кăтартать: фашистсен çар техникипе чĕрĕ вăйне чылай пĕтерет. Оруди командирĕ "Паттăрлăхшăн" медале тивĕçет.

1943 çулхи нарăсăн 2-мĕшĕнче Сталинградра нимĕçсен 330 пинлĕ çарне аркатнă хыççăн С.Иванов расчечĕ Курск пĕккинчи çапăçусене хутшăнать. III степень Мухтав орденне тивĕçни унăн паттăрлăхне аван сăнласа парать. Каярахпа С.Иванов хăйĕн "Катюшипе" Смоленска, Беларуçе, Польшăна нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларма хутшăнать, II степень Мухтав орденне тивĕçет.

Çĕнтерӳ кунне Иванов Эльба юхан шывĕн хĕрринче кĕтсе илет. Кунта çĕнтерӳçĕсен Америка çарĕн офицерĕсемпе салтакĕсен тĕл пулăвне хутшăнма тӳр килет ăна.

■ **Галина МИХАЙЛОВА.**
Шупашкар районĕ

*Чăвашстат хыпарлать*

## Республикăри организацисен финанс кăтартăвĕсем

**/2013 çулхи кăрлач-чӳк уйăхĕсенче, пĕчĕк предпринимательлĕх субъекчĕсемсĕр пуçне, млн тенкĕпе/**






Отчет панă организацисенчен 404-шĕ 13271,3 млн тенкĕ тупăш илнĕ, 156-шĕ 7661,0 млн тенкĕлĕх тăкак тӳснĕ.

Экономика ĕç-хĕлĕн сăнаса тăракан енĕсен хушшинче туса кăларакан промышленноç тытăмĕнчи организацисен финанс кăтартăвĕсем уйрăмах курăмлă – 2259,3 млн тенкĕ. Çакă республикăри финансăн пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсен 40,3 процентчĕпе танлашать.

2013 çулхи кăрлач-чӳк уйăхĕсенче малтанхи çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан тăкаклă организацисен тӳпи 5,8 пункт пысăкланнă, 27,9 процента çитнĕ.

# ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

*Шухăш*

## Чиркӳ чуна чăнахах сиплет-и?

Тĕрлĕ ыйту хускататăр эсир хаçатра. Мана та пĕр тема тахçантанпах канăç памасть. Кăçал Раççейре Культура çулталăкĕ тесе йышăннăран шухăшăма пĕлтерни вырăнлах пулассăн туйăнать.

Атеизм идеологине тĕпе хурса пурăнман ку таранччен, анчах мана тĕн заведенийĕсен паянхи ĕçĕ-хĕлĕ тивĕçтермест. Пĕчĕкренех православи тĕнне йышăннă та /паллах, хам ăнкаракан пуличченех аттеанне тĕне кĕртнĕ/ унăн йăла-йĕркине хисеплесе, май килнĕ таран пăхăнса пурăнатăп. Апла пулин те юлашки вăхăтра хăш-пĕр чиркӳ çине тиркевлĕ пăхма пуçларăм.

Эпĕ Чăваш Енрен аякра пурăнатăп. Пирĕн тăрăхра икĕ чиркӳ кăна. Нумаях пулмасть тĕнчери чи çывăх çыннăм – анне – пурнăçран уйрăлчĕ. Пысăк хуйхă тем пек хуççан та пурнăç парнеленĕ çынна этем ретлĕ тирпейлесе пытармалла.

Аппапа иксĕмĕр чиркĕве кайрăмăр. Алăкран иртнĕ-иртмен, хамăр мĕн çăмăлпа çӳренине калама çăвар уçиччен унта ĕçлекен хĕрарăм хаксемпе паллаштарма тытăнчĕ. Кĕлĕ тутарма – çавăн чухлĕ, пысăк çуртасем кун чухлĕ... Тĕнчери чи хаклă çынну мĕнле сăлтавпа пурнăçран уйрăлни никама та интереслентермест.

Масар çумĕнчи чиркĕве нумайăшĕ кĕреççĕ. Палăртнă вăхăта эпир те çитрĕмĕр. Пачăшкă тухрĕ, мăн саслăскер мĕнлерех юрласа ячĕ! Пурте шартах сикрĕмĕр. Нимĕн те калаймăн – опера театрĕнче пулсан ăна çитекен те тупăнмĕ. Анчах тĕн çурчĕ театр мар вĕт. Юрланине ăнланса пырас терĕм – сăмахсене "чăмламасăр" çăтать. Хĕрес хывни те килĕшмерĕ – ытлашши хăлаçланать пек. Саккас панă чухне пире: "Кĕлĕ пĕр сехете яхăн пырать", – тенĕччĕ. Шăп та лăп 20 минут иртсен пачăшкă: "Çунса пĕтмен çуртасене /ăçтан çунса пĕтейччĕр – пире пысăккисене тыттарнă-çке! – **Авт./** пирĕнтен уйрăлнисемшĕн кайса лартăр", – терĕ чиркӳ умне тепĕр ушкăн килсе чарăннине асăрхаса. Кăшт сывлăш çавăрса илес шухăшпа шалалла кĕрсе çухалчĕ.

"Çуртасемшĕн укçине хăшĕ тӳлет?" – кăшкăрчĕ будкăран матăшкă. Пасартине аса илтерчĕ çак ӳкерчĕк. Ура вăйĕ пĕтсе, куçăм хуралса килчĕ. "Çиччас тӳлетĕп..." – теме кăна пултартăм.

Чăваш Енри чиркӳсенче те унта çӳрекенсенчен укçа сăптăрасси чи малта тăрать-ши? Виçĕ çул каялла Шупашкарти Таса Татиана чиркĕвĕнче пулма тӳр килнĕччĕ. Кăнттам калаçакан пулмарĕ, мĕн ыйтнине хуравларĕç. Пачăшкă хăйне тыткалани те килĕшӳллĕччĕ. Паллах, ун пек чухне чиркӳ чăннипех сăваплă вырăн пекех, çутă тĕссемпе куç умне тухать.

■ **Татьяна НОВИКОВА.**
Саратов облаçĕ

*Çул-йĕр*

## Пуç çапса пулăшу кĕтсе илчĕç те…

Çуралса ӳснĕ ялта час-часах пулатăп, унта пурăнакансен ыйтăвĕсемпе кăсăкланатăп. Олкаш ялĕ Шупашкартан – 25 çухрăмра, Ишлейрен 4 çухрăмра вырнаçнă. Ял тăрăхĕн администрацийĕ Ишлейре вырнаçнă.

Тăван енре тĕпленсе пурăнакансем кĕркуннеçуркунне яла пырса кĕме те, çăрăлса тухма та хĕн пулнипе аптăрасах çитрĕç: хытă сийлĕ çул çукки – чăн нуша. Ентешĕмсем ку ыйтупа ял тăрăхĕн администраци ертӳçи патне миçе хутчен пыман-ши – ĕç вырăнтан тапраниччен чылай вăхăт иртнĕ.

Ĕнтĕ çулран çул ирсерен пылчăк çăрса ĕçе васкама /Шупашкарта ĕçлекен те чылай вĕт-ха/ тивет ялйышăн. Шанчăка йăлтах çухатнăччĕ вĕсем, анчах... 2012 çул вĕçĕнче, хĕл пуçлансан, яла 5-6 машина таранах çул-йĕр сармалли хутăш илсе килчĕç. /Шел, питех паха хутăш пек туйăнмарĕ: те шлак, те галька – хими шăрши сăмсана çурать./ Хайхискерне юрлă çул çинех 200 метр тăршшĕне сарса хучĕç. Тата 800 метр тĕкĕнменнипех юлчĕ. Малтанах чунтан хĕпĕртенĕ çынсен ăшĕ каллех тарăхупа тулчĕ. Пĕрре – ĕçе вĕçне çити пурнăçламанран, тепре – ăна технологие çирĕп пăхăнса туманран.

Çула юртан тасатмасăрах сарни хăйĕн тӳнтерле "çимĕçне" парасса çуркунне кĕтсе те илчĕç Олкашсем: çул пăтă пек çăрăлчĕ. Ăçта хутăш лекнĕ, ăçта çитеймен – мур пĕлет-и? Çул валли проект хатĕрленĕ тĕк мĕншĕн унпа килĕшӳллĕн ĕçе вĕçне çитермеççĕ? Ахăртнех, отчетсем тăрăх – ку ыйтупа тахçанах вĕçнехĕрне тухнă. Тен, куншăн преми илекен те пулнă?

Патшалăх влаçĕ – халăх влаçĕ. Социаллă тĕрĕс марлăх валли вырăн пулма тивĕçлĕ мар пек. Тен, вăрах татăлман ыйтусем уйрăм çын айăпĕпе çыхăннă? Позитивлă улшăну курмастпăр пулсан вырăнти ертӳçĕсене мĕн тума суйлатпăр? Олкаш ял çыннисен тертнушине шута илсе Шупашкар районĕн ертӳлĕхне асăннă ял тăрăхĕ тĕлĕшпе тимлĕрех пулма ыйтатăп.

■ **Олкаш ялĕнче пурăнакансен ячĕпе – М.МИХАЙЛОВСКИЙ**

*Аса илни*

## Ăстасене ял-йыш манмасть

Пирĕн ялта, Ураскилтре, ĕлĕкрех алă ăсти чылай пулнă. Акă тимĕрçĕсене илер. Тимĕре авма-шăратма пĕлесси йăхран йăха куçнă. Эпир ӳснĕ вăхăтра колхозăн тимĕрçĕ лаççинче иккĕн тăрмашатчĕç – Семен Ржанов тата Никандр Краснов. Тырă вырма миçе çĕр çурла шăлламан-ши пултарулăскерсем? Çăмăл ĕç мар вĕт.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçиччен ялти маттур тимĕрçĕ Фадей Александров шутланнă. Ăна малтанах вăрçа илсе кайман – броньпе хăварнă. Пĕррехинче ялта эвакуаципе килсе лекнĕ хĕрарăмсем япала сутса çӳренĕ. Хветкана та тум-тир сĕнеççĕ. Лешĕ туянать. Укçине çийĕнчех кăларса тыттарать. Хайхискерсем вара тӳлемен тесе милицие евитлеççĕ. Çавăн хыççăн Хветка пиччене вăрçа ăсатаççĕ. Вăл унтан таврăнаймасть.

Пирĕн тăрăхри Иван Кузьмин сад ăстиччĕ, катка-пичке янтăлама маçтăрччĕ. Мăшăрĕпе иккĕшĕ те "Маяк" колхозра тăрăшатчĕç, пурнăçа аван ăнтарса пыратчĕç. Иван Михайлович лаша çуни мĕн чухлĕ туман-ши! Киввисене те ним мар юсаса паратчĕ. Çуллахи вăхăтра вара урапа хыççăн урапа ăсталатчĕ. Ачисем – Веня, Валентин, Фая – ĕç çумне пĕчĕкрен çыпăçнăччĕ. Ывăлĕсем аслă шкулта пĕлӳ илчĕç. Асли – вĕрентекен, вăталăххи тухтăр профессине суйларĕç. Студент чухне каникула килсен те ашшĕне пулăшма ӳркенмен вĕсем. Фая та, медсестра пĕлĕвне илнĕскер, яла килсен пĕр ĕçрен те пăрăнман.

Ĕçчен çынна ял савать теççĕ. Ăстасене вара вун-вун çул иртсен те асран кăлармасть. Тепĕр тесен вĕсем пирĕн хутлăхăн историйĕ тесен те тĕрĕсех-çке. Паянхи çамрăк ăру та ан мантăрччĕ вĕсене.

■ **Ливерий ФЕДОРОВ.**
Элĕк районĕ

*Ахрăм*

## "Янра хут купăса" чĕртсе тăратасчĕ

"Хыпар" хаçатăн кăçалхи 10-мĕш номерĕнче Тĕрлемесри Николай Федотов Пĕрремĕш каналпа эрнесерен тухакан "Играй, гармонь, любимая" кăларăма чăваш хут купăсçисене хутшăнтарманнишĕн пăшăрханса çырать. Унăн шухăшне ăнланмалла. Çырăва вуланă май чăвашсене ытларах хумхантаракан ыйту сиксе тухать. Пирĕн хамăрăн та Чăваш патшалăх телекуравĕнче Александр Васильев йĕркелесе ертсе пыракан "Янра, хут купăс" кăларăм пурччĕ-çке! Ăна пин-пин чăваш хавхаланса, хастарланса, пирĕн те тĕлĕнмелле ăста хут купăсçăсемпе юрăçсем пурришĕн мăнаçланса пăхса ларнă. Мĕн тери савăнăç кӳнĕ çак кăларăмсем кашни чăваш чунне! Арсений Тарасовăн автор кăларăмĕсем тата! Чăн-чăн чăвашлăхпа, тăванлăхпа иксĕлми çăл куç пек тапса тăнă вĕсем... Халĕ çав телекăларăмсем çуккишĕн кулянса ассăн сывласа лармалли çеç юлать-и?

Ара, пирĕн халь Наци телекуравĕ пур-çке-ха. Чăваш телекуравĕнче пулнă, халăх чăннипех те юратса курнă кăларăмсене мĕншĕн Чăваш наци телекуравĕнче чĕртсе тăратмалла мар? Вĕсене хатĕрлесе ертсе пынă Александр Васильевпа Арсений Тарасов та, ыттисем те, тавах турра, сывах-ха.

Сăмах май, Наци телекуравĕ хăçан чăн-чăн наци каналĕ пулса тăрĕ-ши? Хальлĕхе унта чăвашла кăларăмсем сахал.

■ **Валерий МУРАВЬЕВ.**
Етĕрне районĕ, Палтай

**Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

*Тĕллевсем*

# Çĕнĕ хуçапа – çĕнĕ вăй

***Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствишĕн 2014 çул ахаль те питĕ яваплă – Культура çулталăкĕ. Иртнĕ çул вĕçĕнче тата пысăк тепĕр ĕç, çĕнĕ тытăм – туризм сфери – хушса панă. Министерство çак «лава» туртма хатĕр-и? Ун пирки Вадим Ефимов министрпа тĕл пулса калаçрăмăр.***

**– Хушма тепĕр ĕç пирки мăн каланă пулăттăр: отрасле малалла аталантарма чăрмантармĕ-и?**

– Кĕскен: туризмпа культурăн пĕр пеклĕх нумай, патшалăх çакăн пек йышăну туни республикăн туризм отраслне çĕкленме пулăшасса шанатпăр.

Раççейре туризм пĕлтерĕшĕ ӳссе пыни куç умĕнчех. Енчен те маларах эпир ăна поход, палатка тата ун умĕнче кăвайт чĕртни пек йăшăннă тăк халĕ çав ăнлав анлăланнă.

Пирĕн республикăра туризмăн çак енĕсене аталантарма майсем пур: этнографи, культурăпа пĕлĕве ӳстерессипе, ĕç тата пулăмпа çыхăннисене. Çавăнпа та туристсен пысăк йышĕ «килсе кĕриччен» питĕ нумай ĕçлемелле. Чи малтанах çакăншăн яваплă çынсен, ертӳçĕсен шухăш-кăмăлне улăштармалла. Инфратытăма тата бренда аталантарма система мелĕпе усă курмалла.

**– Министерство тытăмне çак ĕçпе çыхăннă тата миçе çынпа вăйлатма майсем пур?**

– Хальхи вăхăтра Чăваш Ен культура министерствине 4 çын хушса панă тата уйрăм тытăм йĕркеленĕ. Çумсенчен пĕри – Иван Иванов – шăпах туризм енĕпе ĕçлет.

**– Çĕнĕ сферăпа çыхăннă тĕллевсем пирки тĕплĕнрех пĕлес килет.**

– Вĕсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2013 çулхи раштавăн 31-мĕшĕнче 2014–2020 çулсем валли çирĕплетнĕ «Культурăпа туризма аталантарасси çинчен» ЧР Патшалăх программинче палăртнă.

Тĕллев: Чăваш Ен территорийĕнче конкурентлă, пурнăçăн хальхи ыйтăвĕсене татса пама пултаракан туризм отраслне йĕркелесси.

Хальхи вăхăтра республикăра туризм ыйтăвĕпе 138 организаци ĕçлет. Вĕсем çулленех 170 пин çын ыйтăвне тивĕçтереççĕ.

Паян туризм Чăваш Республикин экономика секторĕнче регионти мĕн пур тупăшăн 0,3 процентне йышăнать, 2020 çул тĕлне кăтарту 1,2 процентпа танлашмалла. Çакна тĕпе хурса ĕçлетпĕр те малашне.

**– Ял туризмне аталантарас тĕллев пур-и?**

–Ял туризмĕ Раççейре те вăй илсе кăна пырать-ха. Вăл экологи лару-тăрăвĕпе тачă çыхăннă. Çут çанталăкра канас тĕлĕшпе республикăра условисем çителĕклĕ. Хальхи вăхăтра Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Етĕрне тата Тăвай районĕсенчи центрсем ку енĕпе ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Ял туризмне илес тĕк чи пĕрремĕшĕ Шупашкар районĕнчи лаша туризмĕн «Заимка» комплексĕ пулчĕ. Вăл инвесторсен укçи-тенкипе аталанать. Унашкал проектсем – «Паснерка» тата «Упа кĕтесĕ» – Тăвай районĕнче пур, Йĕпреçре – «Карăк ращи».

**– Чылай районта чăваш аваллăхĕпе çыхăннă вырăнсем – Патăрьел районĕнче Тикеш, Елчĕк тăрăхĕнче Аслă Таяпа, Шупашкар хутлăхĕнче Апаш – пур. Вĕсем пирки халăха тĕплĕнрех каласа парас тĕллевпе турист маршручĕсем те уçма май пур. Эсир çакăн пирки мĕн шухăшлатăр?**

– Туризмпа культура хушшинче – тачă çыхăну. Культура еткерлĕхĕн объекчĕсем, археологи, архитектура палăкĕсем туризмăн никĕсĕ пулса тăраççĕ те. Чăваш Ен Раççей тата чикĕ тулашĕнчи туристсемшĕн кăсăклă. Ку енĕпе Улатăра та палăртса хăвармалла. Вырăссен авалхи хули хăйĕн тĕлĕнмелле кун-çулĕпе, йăли-йĕркипе, вун тăххăрмĕш ĕмĕрти йывăç çурчĕсемпе, чиркĕвĕсемпе тата ыттипе те кирек кама та тыткăнлать. Кунти кашни кĕтес историпе çыхăннă. Сăмахран, пăравус юсакан «Арсенал» депора Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çулĕсенче К.Е.Ворошилов маршал икĕ хут пулнă.

Пăрачкав сали те культура еткерлĕхĕн объекчĕсемпе пуян, кунта вун тăххăрмĕш ĕмĕрти вырăс купсин пурнăç йĕрки упранса юлнă. Куславкка хули Н.М.Лобачевский музейĕпе паллă. Волчков купсапа Жомини барон çурчĕсем – историпе культура палăкĕсем. Сĕнтĕрвăрри те, Мария Александровна императрица ятне тивĕçнĕскер, туристсемшĕн питĕ кăсăклă.

Республикăн археологи еткерлĕхĕ пирки те чарăнса тăрасшăн. Чăваш Енĕн хальхи территорийĕнче авалтанпах çынсем пурăннă. Çакна археологи палăкĕсем лайăх çирĕплетеççĕ. Унашкал объект 1,5 пин ытла. Вĕсенчен 200-не Раççей Федерацийĕн культура еткерлĕхĕн объекчĕсен патшалăх реестрне кĕртнĕ.

Манăн шухăшăмпа – турист маршрутне Чăваш наци музейĕнчен пуçламалла. Кунта археологи палăкĕсемпе, чавса кăларнă япаласемпе паллашма май пур. Апаш археологи культури – Хĕвел тухăç Европăн бронза ĕмĕрĕнчи чи паллă пулăм. Асăннă культурăпа палăрнăскерсем Чăваш Енĕн хальхи вăхăтри территорине пирĕн эрăчченхи иккĕмĕш пин çуллăхăн пĕрремĕш çурринче пырса кĕнĕ. Апашра çав культурăн асăну палли тата пысăк тĕме пур. Паллăна 2003 çулхи çу уйăхĕнче уçнă. Плита çине çапла çырнă: «Кунта, Апаш ялĕ çывăхĕнче, 1925 çулта В.Ф.Смолин бронза тапхăрĕнчи Апаш культурине уçнă».

Атăлçи пăлхарсен вуннă-вун виççĕмĕш ĕмĕрĕсенчи археологи палăкĕсем – Патăрьел районĕнчи Тикеш ялĕ çывăхĕнчи Тикеш археологи комплексĕ тата Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпа çывăхĕнчи Аслă Таяпа хулашĕ.

Православи зодчестви те пуян. Ку енĕпе чи «ватă» çурт – Введени чиркĕвĕ. Пĕрремĕшне, йывăçран тунине, 1555 çулта хăпартма тытăннă, хальхине вара – вун çиччĕмĕш ĕмĕрĕн çуррине. Чиркӳсен тĕслĕхĕпе вырăнта православи мĕнле вăй илсе пынине уçса пама пулать.

**– Паян Чăваш Ен туристсене кĕтсе илме хатĕр теме пултаратăр-и?**

– Эпир çулленех йăлана кĕнĕ пысăк мероприятисем ирттеретпĕр. Халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри фестивалĕ, декораципе хушма искусство ăстисен Пĕтĕм Раççейри «Руç ăстисем» конкурсĕ, М.Д.Михайлов ячĕллĕ Пĕтĕм тĕнчери опера фестивалĕ, Шупашкарти Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль тата ытти те çĕр-çĕр, пин-пин çынна пуçтарать.

Республика туристсене йышăнма хатĕр. Паллах, малалла та ăнтăлмалла: маршрутсем уçмалла, инфратытăма лайăхлатмалла, акăлчан чĕлхиллĕ сайтсем йĕркелемелле. 2019 çулта Шупашкарăн 550 çулхи юбилейне паллă тăвăпăр, 2020 çулта – республикăн 100 çулне. Савăнăçлă çак самант тĕлне тĕплĕн хатĕрленме пуçланă ĕнтĕ: объектсене реконструкцилеме тытăннă е палăртнă, çĕннисене тума пуçăннă.

**– 15-20 çул каялла тĕп хулари «Шупашкар: 500 çул» ятпа тăракан культурăпа кану паркĕнче Чăваш йăли-йĕркин музей-комплексне тăвас ыйту çĕкленнĕччĕ. Вăхăт шăвать, ĕçĕ вара çук. Çав вырăнтах тата темле комплекс тумалла тесе калаçакансем те пур. Çакăн пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– Туристсем хăйсене Чăваш Енре хăтлă туйччăр, татах таврăнас кăмăллă пулччăр тесе ĕçлемелле пирĕн. Çак тĕллевпех республикăра «Этническая Чувашия» туризм кластерĕн проектне пурнăçа кĕртме пуçлаççĕ. 2013-2017 çулсенче «Ясна» этноэкологи комплексĕн /Шупашкар районĕ/ тата «Амазония» этнокомплексăн /«Шупашкар: 500 çул» культурăпа кану паркĕ/ строительствипе ĕçлемелле. Икĕ проект та чăваш халăхĕн авалхи хăйне евĕрлĕ культурине – пурлăх, ăсхакăл, йăла тата пурнăç йĕркине – уçса парассипе çыхăннă.

Проекта ЧР Спорт министерстви хатĕрленĕ. Ăна Австри, Итали эксперчĕсем пулăшнă. Инвесторĕсем – «ТРИгрупп» АХО, «Экопоселение «Ясна» НП.

Кластер объекчĕсен пĕтĕмĕшле хакĕ – 7680,2 млн. тенкĕ, çав шутра – 2055,9 млн. тенкĕ инфратытăмпа çыхăннă объектсене çĕклеме кайĕ, ытти – туризм объекчĕсем валли.

Проект кăçал федерацин тĕллевлĕ «Раççей Федерацийĕнче шалти тата тулашри туризма аталантарасси /2011-2018/» программине кĕнĕ. 2014 çул валли федераци бюджетĕнчен 59,6 млн тенкĕ уйăрнă. Çак нухратпа инженерин тулаш сетьне йĕркеленĕ çĕрте усă курĕç. Çитес çул тата 69 млн тенкĕ уйăрма палăртнă.

Проекта пурнăçа кĕртни 1,5 пин çын валли ĕç вырăнĕ туса парĕ. Унсăр пуçне республикăн сумне çĕклĕ, туристсене Чăваш Ене явăçтарассине икĕ хут ӳстерме май парĕ.

**– Çĕнĕ ĕçре эпир, журналистсем, мĕнпе пулăшма пултарăпăр-ши?**

– Регионра туризм вăй-хăватне çĕклес, инвестици явăçтарас тĕлĕшпе çут, ăнлантару ĕçне хутшăнасса, Чăваш Ен çут çанталăкĕн тата халăхĕн пуянлăхне, унăн нумай евĕрлĕхне уçса пама пулăшасса кĕтетпĕр.



О.МАЛЬЦЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Çавра сĕтел*

# Искусство: çемье çирĕплĕхĕшĕн

***Шупашкарти "Радуга" курав центрĕнче "Искусство хатĕрĕсемпе çемьен кăмăл-сипет пахалăхĕсене аталантарасси" ятпа канашлу иртрĕ. "Çавра сĕтеле" йĕркелекенĕ – ЧР Общество палатин Культура, вĕрентӳ, этноконфесси хутшăнăвĕсен тата информаци политикин ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕ. Тĕл пулура Шупашкар хулинчи вĕрентӳ тата культура учрежденийĕсен представителĕсем çемьене кăмăл-сипет воспитанийĕ парас тĕлĕшпе пурнăçлакан ĕç-хĕлпе паллаштарчĕç.***



"Радуга" центрта çемьен ăс-тăнпа шухăш-кăмăл интересĕсене искусство пулăшнипе аталантаракан тĕрлĕ проект ĕçлет. 2003 çулта пуçарнă "Туй кунĕнче – музея" проекта 83 мăшăра явăçтарнă. Çамрăксем культура программисене хутшăнса живопиçри, искусствăри çемье пĕлтерĕшне çутатакан ĕçсемпе паллашаççĕ. Анне пулма хатĕрленекенсем "Тĕлĕнтермĕш кĕтсе" проекта хутшăнса тĕнчене килекен пĕчĕк чуна амăшĕн варĕнчех илем енне туртăнма хăнăхтараççĕ. "Çемьепе – музее" проекта ачасемпе ашшĕ-амăшĕн пĕрлехи канăвне пуянлатакан 40 ытла программа кĕрет. Вĕсем çемье çирĕплĕхне упрама пулăшаççĕ, аслă тата çамрăк ăрăва пĕр-пĕрне ăнланма вĕрентеççĕ.

"Живопиç азбуки" шкулчченхи ӳсĕмри ачасене вырăс живопиçĕн ăстисемпе тата жанрĕсемпе паллаштарать. "Живопиç шедеврĕсем – ачасене", "Çамрăк экскурсовод" проектсене те пĕчĕккисем хаваспах хутшăнаççĕ. "Радуга" центр сусăр ачасем валли арт-терапи экскурсийĕсем, пултарулăх мастерскойĕсем йĕркелет.

Вырăс музейĕн виртуал филиалĕ çемье программисене пуянлатма май парать. Мультимедиа кинотеатрĕ пулăшнипе ачасемпе ашшĕ-амăшĕ музей залĕсем тăрăх виртуал çул çӳреве тухаççĕ, компьютер пулăшнипе çĕнетнĕ авалхи керменсене курса савăнаççĕ, картинăсемпе паллашса çĕр-çĕр çул каяллахи вăхăта лекеççĕ...

Тĕп хулари вĕренӳ учрежденийĕсенчен килнисем ачасемпе ашшĕ-амăшĕн тата культура организацийĕсен пĕрлехи ĕçĕ пирки каласа кăтартрĕç. "Çамрăк театрал шкулĕ" проекта чылай пĕлӳ çурчĕ ырласа йышăннă. 1-мĕш шкул вĕрентекенĕ Татьяна Андреева каланă тăрăх – республикăри 39 шкул тата культурăн пилĕк учрежденийĕ /Чăваш патшалăх оперăпа балет тата пукане театрĕсем, Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен библиотеки, Чăваш наци музейĕ, "Радуга" курав центрĕ"/ пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Кунта пурнăçланакан проект уйрăмах кăсăклă. Юлия Тумаланова вĕрентекен класри ачасем, ашшĕ-амăшĕ пурте юрланине палăртрĕ. Пĕчĕккисемпе аслисенчен йĕркеленĕ хор хула, республика, Раççей конкурсĕсенче çĕнтерне.

"Росток" центрта ачасен пултарулăхне пĕчĕкрен аталантарма тăрăшаççĕ. Елена Герасимова директор ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе ывăлĕ-хĕрĕ пысăк çитĕнӳсем тунине палăртать.

Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче вырсарни кунсенче çемье канăвне пуянлатакан "Искусство азбуки" студи, йывăр лару-тăрăва лекнĕ ачасем валли "Музей уçлăхĕ" проектсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Чăваш Республикин ачасемпе çамрăксен библиотекинче "Чăваш Ен культури: 2010 – 2020" программăпа килĕшӳллĕн пурнăçланакан "Чи нумай вулакан çемье" конкурсăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл ачасене çеç мар, çитĕннисене те кĕнекепе туслаштарать.

Ларура çавăн пекех паянхи обществăра культурăна вăйлатассипе çыхăннă çивĕч ыйтусене пăхса тухрĕç. "Çавра сĕтел" калаçăвне пĕтĕмлетсе культура учрежденийĕсен паха опытне республикăра сарас тĕллевпе ĕç ушкăнне туса хума йышăнчĕç. Вăл ĕç-хĕл йĕркине, сĕнӳсемпе резолюцисене палăртĕ.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

## Илем патне çул уçар

**Ача илем енне туртăнни, искусствăн чи паха произведенийĕсене курма ăнтăлни, пултарулăх мастерскойĕсенче ĕçлеме тăрăшни савăнтарать паллах. Анчах хăшĕ-пĕри утма, чупма пултарайманран, картлашкасем тăрăх хăпарса анма йывăртан музейсене, библиотекăсене тухса çӳреймест. Шел, эпир усал чире сирейместпĕр. Çапах та вĕсене савăнăç, телей парнелеме, илем патне çул уçса пама пултаратпăр.**

**Шупашкар хулинчи "Радуга" ККЦ "Искусство патне – чăрмавсăр" ыр кăмăллăх акцийĕ ирттерет. Курав центрĕнчи пусма картлашкисем çине пандус хатĕрлесе вырнаçтарма укçа – 38390 тенкĕ – пухать. Çак хатĕр сусăр ачасене курав центрĕн залĕсене, пултарулăх мастерскойĕсене чăрмавсăр кĕрсе çӳреме, илем тĕнчипе паллашма, ăсталăхне аталантарма май парĕ.**

**Укçана çак шут çине куçарма пулать:**
**ИНН 2127304540**
**КПП 213001001**
**р/с 40703810100000000127 в ООО КБ "Мегаполис" г.Чебоксары**
**к/с 30101810600000000723**
**БИК 049706723**

**Тĕллев – "Радуга" культура-курав центрĕнче пандус вырнаçтарма.**

**Чăваш Республикин "Чĕм культурин центрĕ" общество организацийĕ**

**Адрес: Шупашкар хули, Эльмен урамĕ, 4а çурт, "Радуга" ККЦ.**

**Тел.: /8352/ 31-50-50**

**Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ**

## Тĕп ĕçсене палăртнă

Культура çулталăкĕ питĕ пуян. Профессионал искусство, вĕренӳ тата наци хутшăнăвĕсен енĕпе кăна 200 яхăн пысăк мероприяти йĕркелеме палăртнă. Пĕлтерĕшлĕ, çирĕп тымар янă проектсем çаксем: Пĕтĕм тĕнчери XVIII балет фестивалĕ, Шупашкарти Пĕтĕм тĕнчери VII кинофестиваль, халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм тĕнчери XXII «Раççей çăл куçĕсем», «Янра, Раççей кĕтесĕ!» тата ытти те.

Раççей халăх артистки Надежда Бабкина ертсе пынипе иртекен «Раççей юррисем» фестиваль-марафона кĕтетпĕр. Унта Краснодар крайĕн, Çурçĕр Осети–Алани, Удмурт республикисен, Владимир облаçĕн тата Бабкинăн «Вырăс юрри» театрĕ хутшăнĕç.

Музей проекчĕсенчен чи паллăраххисем çаксем: Чăваш патшалăх ӳнер музейне йĕркеленĕренпе 75 çул çитнине халалланă курав, Пĕтĕм тĕнчери «Музейсен каçĕ – 2014» акци, Раççей ӳнер академийĕн регионсен хушшинчи «Красные ворота» куравĕ.

Театрсем те халăха савăнтарĕç. Раççей Культура министерствипе пыракан калаçусем ăнăçлă вĕçленессе шанатпăр, çавна май Шупашкар çыннисен çĕр-шыври паллă чылай коллективăн пултарулăхĕпе паллашма май тупăнĕ. Сăмахран, Нацисен патшалăх театрне, Аркадий Райкин ячĕллĕ «Сатирикона» тата ытти килессе шанатпăр.

Вулавăшсемпе музейсен, культурăн ытти учрежденийĕн вăйĕпе тĕрлĕ курав, презентаци, конкурс, фестиваль, «çавра сĕтел», семинар, конференци иртĕç.

## Орган хыççăн – арфа

Чăваш академи симфони капеллишĕн Культура çулталăкĕ ăнăçлă пуçланчĕ: ун оркестрĕ çĕнĕ инструментпа – арфăпа – пуянланчĕ. Халĕ кунта пур инструмент та пур.

Нумаях пулмасть инçетри Америкăран килсе çитнĕ кĕвĕçемĕ хатĕрĕн презентацийĕ иртрĕ. Капелла ертӳçи, Раççей халăх артисчĕ Морис Яклашкин пĕлтернĕ тăрăх – асăннă инструмент оркестрăн вăй-хăватне, пултарулăх шайне тата çӳлерех çĕклеме, репертуара пуянлатма май парĕ. Ку енĕпе иртнĕ çул Германире туяннă орган та пулăшĕ.

Çĕнĕ инструментпа пуш уйăхĕнчи концертра çывăхрах паллашăпăр. Оркестр Василий Клинниковăн Пĕрремĕш симфонине итлевçĕсем патне çитерĕ.

Арфăпа калаканĕ – оркестр солистки Наталья Иванова. Вăл хăй вăхăтĕнче Хусан консерваторийĕнче домбрăпа калама вĕреннĕ, халĕ тата икĕ çул унтах арфа енĕпе пĕлӳ пухать.



## Юбилярсене халалланă



Канаш районĕнчи Сиккасси вулавăшĕнче паллă пулăмсен «Календаре уçнă май» куравне йĕркеленĕ. Вăл паллă çынсен пултарулăх ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарать. Кăрлач уйăхĕ, тĕслĕхрен, юбилейсемпе пуян пулчĕ. М.Н.Данилов-Чалтуна /çуралнăранпа 120 çул çитрĕ/, Л.В.Таллерова /85 çул/, Тайăр Тимккине /125 çул/ халалласа библиотекарьсем шкул ачисем валли курав-калаçу иртернĕ, çыравçăсен пултарулăхĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă.

## Аваллăх манăçмасть

Вăрнар районĕнчи Хăмăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта ĕçлекенсем ачасене аваллăха хаклама вĕрентеççĕ. Иртнисĕр пуласлăх çуккине лайăх ăнланаççĕ вĕсем. Культура çулталăкĕнче вара ку енĕпе тата тухăçлăрах ĕçлесшĕн. Çак ĕçе кĕçĕн çулти ачасенчен пуçламаллине тĕпе хураççĕ. Сăмахран, нумаях пулмасть виççĕмĕш класра вĕренекенсене Малтикасри вулавăшра йĕркеленĕ «Тăван аваллăх» музейпе паллаштарнă. Кунта çирĕм тата вун тăххăрмĕш ĕмĕрсенчи япаласем упранаççĕ. Вĕсемпе хăй вăхăтĕнче ялта пурăннă хресченсем усă курнă.



Ачасем асламăшĕсемпе мăн асламăшĕсен, ытти тăванĕн ĕç хатĕрĕсемпе кăсăкланса паллашнă.

## «Чечеклен, юратнă Муркаш ен!»



Çапла ят панă районта çулленех иртекен конкурс-фестивале. Кăçал ăна Культура çулталăкне тата Муркаш районне йĕркеленĕренпе 70 çул çитнине халалланă.

Кăрлачăн 24-мĕшĕнче Оринринти информаципе культура центрĕнче «Шуракăш» юрăпа ташă ансамблĕ, Оринринти халăх театрĕ, «Оринин ен» ветерансен хорĕ тата Мулкачкасси клуб-вулавăш çумĕнчи «Пучах», Атапайри клубра нумаях пулмасть çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă «Сурпан» ушкăнсем сцена çине тухнă.

Программăна «Сурпанра» /ертӳçи ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Родион Петров/ юрлакансем уçнă. Регина Быкова шӳчĕсем халăха култарнă, шухăша янă.

Вырăнти халăх театрĕ Николай Сидоровăн «Авлансан каччă пулаймăн» камитĕнчи тата Федор Павловăн «Ялта» драминчи сыпăксене вылянă. «Оринин ен» хор та, «Шуракăш» ансамбль те /ертӳçи ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Владимир Александров/ куравçăсене çĕнĕ программăпа паллаштарнă.

## Ӳнерçĕн ятарлă куравĕ



Патăрьел районĕн культурăпа кану центрĕн фойинче вырăнти ачасен искусство шкулĕн преподавателĕн, Раççей Художниксен, Геральдистсен союзĕсен членĕн, Раççей тата ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн Мидхать Шакировăн картинисен «Тăван тăрăхсем» ятарлă куравĕ уçăлнă.

Мидхать Алимзянович – хăйне евĕрлĕ художник, наци ӳнер пуянлăхне тĕпчекенĕ. Кун-çулĕн чĕрĕк ĕмĕрне çитĕнекен ăрăва эстетика тата ӳнер пĕлĕвĕ парас ĕçпе çыхăнтарнă. Юлашки çулсенче монумент искусствипе кăсăкланать. Нумай енлĕ пултарулăхĕпе республикăра пурăнакан халăхсен искусствине упраса хăварас, малалла аталантарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет.

**Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ

